27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ИЮЛЬ
19
ЮНКУН
142(6637) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА

УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, наступлени тума тытӑнса, артиллерипе авиаци массӑллӑн пулӑшнипе, нимӗҫсен Львов енчи темиҫе тӑрӑхран тӑракан вӑйлӑ тӗреклетнӗ оборонине татса кӗнӗ те, виҫӗ кун хушши ҫапӑҫса, 50 километра ҫити шалалла кӗрсе кайнӑ, татса кӗнӗ вырӑнӑн анлӑшне 200 километра ҫити сарнӑ.

Наступлени тунӑ вӑхӑтра фронт ҫарӗсем ПОРИЦК, ГОРОХОВ, РАДЗЕХОВ, БРОДЫ, ЗОЛОЧЕВ, БУСК, КАМЕНКА хулисене, КРАСНОЕ хулине, пысӑк чугун ҫул узелӗ пулса тӑраканскере, тытса илнӗ тата халӑх пурӑнакан ытти 600 пункта ытла йышӑннӑ.

Противникӑн оборонине татса кӗнӗ чухнехи ҫапӑҫусенче ГОРДОВ генерал-полковникӑн, ПУХОВ генерал-лейтенантӑн, КУРОЧКИН генерал-полковникӑн, МОСКАЛЕНКО генерал-полковникӑн, ЧЕРОКМАНОВ генерал-майорӑн, ДОНСКОВ генерал-майорӑн, ГЛУХОВ генерал-лейтенантӑн, ВЕДИН генерал-майорӑн, ЗАХАРОВ генерал-майорӑн, ТЕРТЫШНЫЙ генерал-майорӑн, ГОРДЕЕВ генерал-майорӑн ҫарӗсем; БАРАНОВ генерал-лейтенантӑн, МАМСУРОВ генерал-майорӑн, АРИСТОВ полковникӑн, БОРЩОВ полковникӑн утлӑ ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн ВАРЕНЦОВӐН, артиллери генерал-майорӗн КУБЕЕВӐН, артиллери генерал-майорӗн КАБАТЧИКОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ДЗЕВУЛЬСКИЙӖН, артиллери генерал-майорӑн КОФАНОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ВОЛКЕНШТЕЙНӐН, ХУСИД полковникӑн, артиллери генерал-майорӑн САНЬКОН артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн НОВИКОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ПОЛУБОЯРОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн АНИКУШКИНӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн КОРОЛЕВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн РОМАНОВӐН, САДОВСКИЙ полковникӑн, БЕЛЯЕВ полковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн КРАСОВСКИЙӖН, авиаци генерал-майорӗн ГАЛУНОВӐН, авиаци генерал-майорӗн АРХАНГЕЛЬСКИЙӖН, авиаци генерал-майорӗн ГОЛОВНЯ, авиаци генерал-майорӗн КАМАНИНӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн НАНЕЙШВИЛИ, авиаци генерал-майорӗн УТИНӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн РЯЗАНОВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн АЛАБИНСКИЙӖН, авиаци генерал-майорӗн ПОЛБИНӐН, авиаци генерал-майорӗн РИТРУКӐН, ПОКРЫШКИН полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ГАЛИЦКИЙӖН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ВАРВАРКИНӐН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ГУСЕВӐН, КОНЦЕВОЙ полковникӑн, ВОЛОДИН полковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БУЛЫЧЕВӐН, ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн АХРЕМЕНКӐН, НЕСТЕРОВ полковникӑн, ТАРУНИН полковникӑн, СИМХОВИЧ подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ӗмӗрлӗхе палӑртса хӑварас тесе, нимӗҫсен оборонине татса кӗнӗ чухнехи ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑсҫене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, июлӗн 18-мӗшӗнче, 23 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, виҫӗҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, Львов патне пымалли вырӑнсенче нимӗҫсен оборонине татса кӗнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан ҫарсене, противникӑн оборонине татса кӗнӗ чухнехи ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи июлӗн 18-мӗшӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Финанс работникӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1944 ҫулхи иккӗмӗш кварталти итогӗсем ҫинчен

Чӑваш АССР Совнаркомӗ, финанс работникӗсен бюджета лайӑх пурнӑҫа кӗртессишӗн пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1944 ҫулхи иккӗмӗш кварталти итогӗсене пӑхса тухса, ӑмӑртура **Октябрьски, Красноармейски** районсен тата **Шупашкар хула совечӗн** финанс отделӗсем **мала тухнӑ** тесе йышӑннӑ.

Октябрьски финанс отделӗ (заведующийӗ Егоров юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Хрисанов юлташ) иккӗмӗш кварталта халӑхран укҫа-тенкӗ пухмалли плана 160,3 процент, уйрӑмӑн илсен, налогсем енӗпе — 251,6 процент, Военнӑй Заемӑн укҫине пухас енӗпе — 152,2 процент, тӗрлӗ вкладсем енӗпе — 128 процент, перекет кассисене укҫа хывас енӗпе—175 процент тата оборотран илмелли налогсене пухас енӗпе — 101 процент тултарнӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Октябрьски райфинотделӗнчех хӑвармалла тунӑ тата ӑна 12.000 тенкӗ премипе панӑ.

Иккӗмӗш вырӑна тухнӑ Красноармейски финанс отделӗ (заведующийӗ Скворцов юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Александров юлташ) халӑхран укҫа-тенкӗ пухмалли иккӗмӗш кварталти плана 164,7 процент тултарнӑ. Красноармейски финанс отделне иккӗмӗш премипе — 8000 тенкӗ памалла тунӑ.

Ӑмӑртура виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑннӑ Шупашкар хула совечӗн финанс отделне виҫҫӗмӗш премипе — 5000 тенкӗ памалла тунӑ.

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариатӗнче

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариачӗ, Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн 1944 ҫулхи июнь уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, Володин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен тата Слуцкий юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен заводсене кашнине иккӗмӗш премипе памалла тунӑ.

Совет Союзӗн Геройӗ А. Иванов капитан Шупашкарта

Ӗнер Шупашкара пирӗн паттӑр земляк — Совет Союзӗн Геройӗ Анатолий Александрович **Иванов капитан** килчӗ.

Анатолий Иванов вӑрҫӑччен Шупашкар чугун ҫул станцийӗнче ӗҫленӗ, вӑл ҫӗнӗ чугун ҫул валли ҫамрӑк кадрсем хатӗрлес тӗлӗшпе активлӑн ӗҫленӗ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫлансанах фронта кайнӑ. Вӑл Чӑваш республики шефа илнӗ дивизире пулнӑ. 1942-мӗш ҫул вӗҫӗнче вӑл фронтовиксен бригадипе пӗрле пирӗн республикӑна килсе кайрӗ, вӗсем промышленность предприятийӗсен тата колхозсен ӗҫӗсемпе паллашрӗҫ. Ленин орденӗ, II-мӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗ тата «Хастарлӑхшӑн» медаль унӑн кӑкӑрне илемлетсе тӑраҫҫӗ, вӗсем А. Иванов хастарлӑн та паттӑррӑн ҫапӑҫнине кӑтартаҫҫӗ.

Тӑван ҫӗршыв унӑн паттӑр ӗҫӗсене тивӗҫлипе хакларӗ. Ӑна хисеплӗ ят — Совет Союзӗн Геройӗ ятне панӑ.

Шупашкара килес умӗн Анатолий Иванов капитан хӑйӗн тӑван поселокӗнче Вӑрнарта пулнӑ, унта ӑна хӑйӗн землякӗсем ӑшшӑн кӗтсе илнӗ.

Ӗнер пирӗн паттӑр земляк республикӑри партипе совет организацисен руководителӗсемпе тӗл пулчӗ.

Тытса илнӗ хӗҫпӑшалсен выставкинче

Мускава тӑшмантан тытса илнӗ хӗҫпӑшалсен выставкине Украинӑри 4-мӗш фронт ҫарӗсемпе Уйрӑм Приморски Арми Крымра нимӗҫсене аркатса тӑкнӑ чухне тытса илнӗ техникӑн тӗслӗхӗсене илсе пынӑ.

Артиллери пайне Германин хальхи вӑхӑтри йывӑр тупписене илсе пынӑ, вӗсене Крупп завочӗсем 1941 ҫулта туса кӑларнӑ. «Бофорс» йышши 105 миллиметр калибрлӑ тупӑсем уйрӑмах паларса тӑраҫҫӗ. Вӗсем ҫине вӗсен прислуги эсэсовецсем пулни ҫинчен ҫырса хунӑ. Херсонес сӑмсахӗ ҫинче пытанма хӑтланнӑ ҫав пуҫкасакан гитлеровецсене пирӗн артиллери пӗтӗмпех вӗлерсе пӗтерне, вӗсен шӑтса пӗтнӗ тупписем халь выставкӑра.

Выставкӑн **авиаци** пайне «Фокке-Вульф-190» самолетӑн ҫӗнӗ йышши тӗслӗхне илсе пынӑ. Ун ҫинче совет летчикӗ хӑйӗн туппипе пенин пысӑк йӗрӗ пур. Инженери пайне тинӗс шывне ӗҫме юрӑхлӑ тӑвакан машина илсе пынӑ, ӑна Крымра тытса илнӗ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮЛӖН 17-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

ОПОЧКА хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, Калинин облаҫӗнчи район центрне **СЕБЕЖ** хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 60 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — **БЕРЕЗНИЦА, БРИНЕВКА, ВЯРЬМОВО, ПЕТРУЧЕНКИ, СТОЛБОВА, БОРИСЕНКИ, МИГЕЛИ, ЛОГУНЫ, ДВОРИЩЕ, ГАВРИЛИНЫ** ятлӑ пысӑк ялсем тата **СЕБЕЖ** чугун ҫул станцийӗ.

ДРИССА хулинчен ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, Витебск облаҫӗнчи район центрне **ОСВЕЯ** хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — **СВЯТИЦА, ПАДЕРЫ, ДЕДИНО, ГОРБУЛИ** ятлӑ пысӑк ялсем.

АЛИТУС хулинчен ҫурҫӗртерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫаплах **НЕМАН** шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринчи плацдармсене аслӑлатасшӑн ҫапӑҫнӑ, халӑх пурӑнакан 20 пункта ытла йышӑннӑ.

ВОЛКОВЫСК хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, наступлени вӑйлатса пырса, Белосток облаҫӗнчи район центрне **СВИСЛОЧЬ** хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра— **ЛАША, ПРОКОПОВИЧИ, МАССАЛЯНЫ, ЗЙМИНОВЦЫ, ВЕЛИКАЯ БЕРЕСТОВИЦА, КУКОЛКИ** ятлӑ пысӑк ялсем тата **АНДРЕЕВИЧИ, РУДОВКА, СВИСЛОЧЬ** чугун ҫул станцийӗсем.

БРЕСТ хули енче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, Брест облаҫӗнчи район центрӗсене **ПРУЖАНЫ** хулине тата **ШЕРЕШОВ** ялне, Пинск облаҫӗнчи район центрне **ДРОГИЧИН** хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 200 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — **БЕЛОВЕЖА, ВИДОМЛЯ, ЩЕРБОВО, ЩЕРЧЕВО, ЛИНОВО, МАЛЕЧЬ, ВОРОТНО, ИЛОСК, ДЗЯТКОВИЧИ, ЛОСЬНИЦА, СЕМЕНОВЩИЗНА, ПОПИНА, КУБЛИН** ятлӑ пысӑк ялсем тата **ПРУЖАНЫ, ПАВЛОВИЧИ, ОРАНЧИЦЫ, СНИТОВО, ДРОГИЧИН** чугун ҫул станцийӗсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Июлӗн 16-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗн пур фронтсенче нимӗҫсен 100 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 94 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Опочка хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Себеж хули патне пымалли вырӑнсене нимӗҫсен вӑйлатнӑ оборона тӑрӑхӗ хӳтӗлесе тӑнӑ. Ҫавӑнпа усӑ курса, нимӗҫсем хытӑ хирӗҫ тӑнӑ. Совет ҫарӗсем тӑшмана халтан янӑ, унӑн ҫыннисемпе техникине нумай пӗтерсе тӑкнӑ. Вара пирӗн пехотинецсемпе танкистсем, тӑшмана вӑйлӑн пырса ҫапса, унӑн оборонине хуҫса тӑкнӑ та Себеж хулин хӗвелтухӑҫ хӗррипе вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Ҫав вӑхӑтра пирӗн ытти чаҫсем нимӗҫсене Себеж, Нечерица, Лисно кӳллисем патӗнчи оборона позицийӗсенчен хӗссе кӑларнӑ та Себеж хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри района тухнӑ. Хаяр ҫапӑҫусенче совет ҫарӗсем тӑшман оборонин Себеж патӗнчи узелне аркатса тӑкнӑ. Себеж хулине фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен тасатнӑ. Себеж хулишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 329-мӗшпе 263-мӗш пехотнӑй дивизийӗсен чаҫӗсене аркатса тӑкнӑ. 2.000 нимӗҫе ытла тыткӑна илнӗ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Алитус хулинчен ҫурҫӗртерехре тата кӑнтӑртарахра тӑшман, пирӗн ҫарсене Неман шывӗ урлӑ хӑваласа яма хӑтланса, контратакӑсем тунӑ. Совет боецӗсем гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янӑ, унтан, малалла куҫса, халӑх пурӑнакан 20 пункта туртса илнӗ. Тӑшман йывӑр ҫухатусем тӳсет. Пӗр участокра пирӗн чаҫсем 800 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, 9 танкпа хӑй тӗллӗн сӳрекен туппа ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Гродно хулине туртса илнӗ Белоруссири 3-мӗшпе 2-мӗш фронтсен ҫарӗсем трофейӑсем нумай тытса илнӗ. Нимӗҫсенчен боеприпас, запас чаҫсен, апат-ҫимӗҫ тата ҫар пурлӑхӗн склачӗсене тытса илнӗ. Трофейӑсен шутӗнче паровозсем, ҫар хатӗрӗсем тиенӗ вагонсем, ансӑрпе автомашина тиенӗ платформӑсем нумай.

* * *

Волковыск хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем хытӑ хирӗҫ тӑракан тӑшманпа ҫапӑҫнӑ. Кӑҫ пулса килнӗ тӗлелле совет боецӗсем хирӗҫ тӑракан нимӗҫсене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та, малалла хӑвӑртӑн куҫса пырса, Свислочь хулине туртса илнӗ. Тӑшманӑн 1.000 салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ. Нимӗҫсен 6 танкне тата 24 туппине пӗтерсе тӑкнӑ. 11 тупӑ, 48 пулемет тытса илнӗ. 200 нимӗҫе ҫити тыткӑна илнӗ.

* * *

Брест хули енче пирӗн чаҫсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Шоссе ҫулӗсемпе ахаль ҫулсен паха узелӗ пулса тӑракан Пружаны хули районӗнче хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Хулана кӗмелли вырӑнсене тӑшман ҫине тӑрсах хӳтӗленӗ, час-часах контратакӑсем тунӑ. Пирӗн утлӑ ҫар чаҫӗсемпе танковӑй чаҫсем питӗ хӑвӑрт тӑшмана ҫавӑрса илмелли маневр тунӑ та Пружаны хулинчен хӗвеланӑҫнелле тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнелле каякан ҫулсене пурне те татнӑ. Хула районӗнче ҫавӑрса илнӗ нимӗҫсем, кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнелле татса тухма хӑтланса, пӗтӗм чун хавалӗпе ҫапӑҫнӑ, анчах вӗсене аркатса тӑкнӑ. Пирӗн ҫарсем тӑшман пехотин икӗ полкне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫитӗнӗве вӑйлатса пырса, совет чаҫӗсем халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла йышӑннӑ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн бомбардировщикӗсен ушкӑнӗсем, гварди подполковникӗ Раков тата майор Пономаренко командир пулса ертсе пынипе, тӑшманӑн Котка портӗнчи суднисене атакӑланӑ. Бомбӑсем тӳрех пырса тивнипе пула, финсен 3.900 тонна таякан «Вяйнямяйнен» ятлӑ броненосецӗ шыва путнӑ. Финляндин ҫар флотӗнче икӗ броненосец пулнӑ. Вӗсенчен пӗрне — «Ильмаринен» ятлине — пирӗн карапсем Финн заливӗнче 1941 ҫулхи сентябрь уйӑхӗнче атакӑланӑ та, вара вӑл минӑсем ҫине пырса кӗрсе сирпӗнсе кайнӑ. Халӗ, ҫапла, финсен юлашки пысӑк ҫар карапне тинӗсе путарнӑ. «Вяйнямяйнен» броненосец ҫинче 254-миллиметрлӑ тӑватӑ тупӑ, 105 миллиметрлӑ 8 тупӑ, 40 миллиметрлӑ 4 тупӑ тата 20 миллиметрлӑ икӗ зенитнӑй тупӑ пулнӑ. Ку броненосец 1933 ҫулта строя тӑнӑ.

Унсӑр пуҫне, Тихомиров капитан ертсе пыракан самолет ҫав Котка портӗнчех тӑшманӑн 6.000 тонна таякан транспортне шыва путарнӑ.

* * *

Брест облаҫӗнчи партизансен отрячӗсем пӗр уйӑх хушшинче нимӗҫсен 50 ҫар эшелонне ытла ӳпӗнтерсе янӑ. Совет патриочӗсем ҫарсем, хӗҫпӑшал тата боеприпас илсе пыракан темиҫе ҫӗр вагонпа платформӑна пӗтерсе тӑкнӑ. Александр Невский ячӗпе тӑракан отрядри партизансем каялла чакакан нимӗҫсен автоколоннине тапӑннӑ та тӑшманӑн 120 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен 100 автомашина, 200 винтовка тата боеприпассем нумай тытса илнӗ.

МИНСКРИ ӖҪҪЫННИСЕН МИТИНГӖ

Июлӗн 16-мӗшӗнче Минскри ӗҫҫынниСемпе Минск облаҫӗнчи партизансен митингӗ пулса иртнӗ. Совет Белоруссин столицине ирӗке кӑларнӑ ятпа иртерекен митинга Минскра пурӑнакан 50 пин ҫын тата 30 пин партизанпа партизанка ытла пухӑннӑ. Митингра Белорусси ССР-ӗн Совнаркомӗн председателӗ Пономаренко юлташ, партин Минскра вӑрттӑн ӗҫленӗ область комитечӗн секретарӗ Бельский юлташ тата ыттисем те сӑмах тухса каланӑ. Вӗсем Минска нимӗҫ захватчикӗсен пусмӑрӗнчен ирӗке кӑларнӑшӑн Хӗрлӗ Ҫара тата унӑн Верховный Главнокомандующине Сталин юлташа тав тунӑ. Митинга пухӑннӑ ҫынсем, ҫав тери савӑнса, Сталин юлташа яма ҫыру йышӑннӑ тата Белоруссири коммунистсен партийӗн Центральный Комитетне салам янӑ.

Митинг хыҫҫӑн партизансен соединенийӗсен парачӗ пулса иртнӗ. (ТАСС).

Мускавра спорт уявӗ мӗнле иртнӗ

Физкультурниксен Пӗтӗм Союзри кунӗ ячӗпе Мускавра «Динамо» стадионӗнче спортпа гимнастика уявӗ пулса иртнӗ. Мускавра пурӑнакан темиҫе вунӑ пин ҫын чупмалли ҫулсем ҫинчи тата ешӗл хирти питӗ интереслӗ ӑмӑртусене тимлӗн сӑнаса тӑнӑ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн, профсоюзсен, вӑтам шкулсен тата спорт обществисен физкультурникӗсен 20 колонни, хӑйсен тӗрлӗ тӗслӗ ялавӗсене йӑтса, парада хатӗрленсе тӑнӑ. Физкультурӑпа спортӑн Мускав хули комитечӗн председателӗ Свиридов юлташ вӗсене кӗскен саламланӑ. Вӑл Хӗрлӗ Ҫарпа совет халӑхӗн аслӑ ҫулпуҫне, физкультурниксен чи лайӑх тусне Сталин юлташа сывлӑх суннине темиҫе пин сасӑ «ура» кӑшкӑрса хапӑл туса йышӑннӑ.

Спортпа гимнастика уявӗ совет ҫамрӑкӗсен вӑйне, ҫаврӑнӑҫулӑхне тата вӑл пиҫӗхнине кӑтартакан чаплӑ кун пулса тӑнӑ. Легкоатлетсем ҫӗнӗрен Пӗтӗм Союзри 6 рекорд тунӑ.

Юлашкинчен пирӗн ҫӗршыври чи вӑйлӑ командӑсем — «Динамо» (Тбилиси) тата «Торпеда» (Мускав) — футбол вӑййи выляннӑ. (ТАСС).

Тӑшман тылӗнче. Белоруссин хӗвеланӑҫ облаҫӗнчи партизансем патӗнче. **Ӳкерчӗк ҫинче:** Ч. ялӗнчи хресчен арӑмӗ П. юлташ партизансем патне ҫӑкӑр илсе пынӑ.

М. ТРАХМАН фотоӳкерчӗкӗ.

Наступлени ҫулӗ

САПӐҪУРИ ҪАР, июлӗн 17-мӗшӗ. **(ТАСС спецкорӗ).** Белоруссири 3-мӗшпе 2-мӗш фронтсен ҫарӗсем ӑнӑҫлӑн наступлени туса пыраҫҫӗ. Шӑрӑх кунсем вырӑнне, пирӗн чаҫсем пыракан ҫулсем ҫинче вӗҫӗ-хӗррисӗр тусан тӑнӑ кунсем вырӑнне ҫумӑрлӑ кунсем килсе ҫитрӗҫ. Анчах ывӑнма пӗлмен пехотинецсем ӗлӗкхи пекех хӑвӑрт малалла каяҫҫӗ, танкистсем тӑшмана ӗлӗкхи пекех хытӑ хӑваласҫӗ. Стрелоксемпе пӗрле артиллеристсем пыраҫҫӗ. Салтаксене ҫантталӑк та, ҫӗрлехи тӗттӗм те, ывӑнни те чарса тӑраймасть. Вӗсем тӑшмана пыра-пыра ҫапаҫҫӗ, ӑна хӑвалаҫҫӗ. Вӗсем хӗвеланӑҫнелле каяҫҫӗ.

Темиҫе кун каялла кӑна пирӗн ҫӗршыв Верховный Главнокомандующин Сталин юлташӑн Лида хулине илни ҫинчен калакан приказне итлерӗ. Ҫав хулана тытса илнӗ чаҫсем паян ӗнтӗ нумай малалла кайнӑ. Ҫӑмӑллӑн куҫакан чаҫсем ҫеҫ мар, пехота та, Неман шывӗ патне пырса ҫитсе, ун урлӑ каҫса кайнӑ. Пирӗн кавалери соединенийӗсем, тӑшман оборонин тӗреклетнӗ пункчӗсене аркатса пырса, Гродно хулине ҫурҫӗрпе ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ енчен вӑркӑнса кӗнӗ те урамсенче ҫапӑҫма пуҫланӑ. Часах ҫав хула патне Хӗрлӗ Ҫарӑн пехотнӑй, танковӑй тата артиллери чаҫӗсем пырса ҫитнӗ. Нимӗҫсем хаяррӑн хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫнӑ, хулана кирек мӗн пулсан та хӑйсен аллинчех тытса хӑварма тӑрӑшнӑ. Вӗсем ҫапӑҫӑва сапер, строительство, хуҫалӑх тата санитари подразделенийӗсене кӗртсе янӑ. Гродно хулишӗн икӗ кун хушши ҫапӑҫса, совет чаҫӗсем тӑшманӑн темиҫе соединенине аркатса тӑкнӑ, унтан, тӑшмана пӗтӗмпех халтан ярса, ӗнер ирхине Гродно хулине крепоҫне тытса илнӗ. Гродно хули вӑл чугун ҫулсемпе шоссе ҫулӗсен пысӑк узелӗ тата нимӗҫсен оборонин ҫирӗплетнӗ паха районӗ пулса тӑнӑ, вӑл Хӗвелтухӑҫ Пруссин чикки патне пымалли вырӑнсене хӳтӗлесе тӑнӑ.

Минскпа Вильнюс хушшинчи чугун ҫул ҫинче нимӗҫ унтер-офицерӗ Альфред Гутерт тыткӑна парӑннӑ. Вӑл Минскран хӗвелтухӑҫнерехри районра хунӑрласа илнӗ ҫарсемпе пӗрле пулнӑ. Унӑн чаҫне унта аркатса тӑкнӑ. Гутерт вӑрмана тарса ҫӑлӑнса юлнӑ. Вӑл 8 кун хушши компас тӑрӑх хӗвеланӑҫнелле утнӑ, хӑйсен чаҫӗсем патне ҫитме ӗмӗтленнӗ. Анчах та фронт нумай малалла кайнӑ. Гутерт тыткӑна лексессинчен хӑтӑлас ҫуккине ӑнланса илнӗ. Тыткӑна лексен, вӑл чи малтан ҫапла ыйтнӑ: фронт ӑҫта? — тенӗ. Фронт ӑҫтине ӑнлантарса парсан, вӑл шӑппӑн ҫапла каланӑ:

— Халиччен никам та кун пек наступлени туманччӗ-ха, — тенӗ.

Гитлер командованийӗ хӑйӗн ӗҫӗсене тӳрлетме, совет чаҫӗсене тытса чарма тем пекех тӑрӑшать. Тылра ҫӗнӗ полксемпе дивизисем тӑвать те фронта ярать.

Темиҫе участокра нимӗҫсем контратакӑсем тӑваҫҫӗ. Вӗсем ҫапӑҫӑва пехотӑна, вуншар танк тата хӑй тӗллӗн сӳрекен тупӑсем кӗртсе яраҫҫӗ. Каунасран хӗвелтухӑҫнерехри пӗр ял патӗнче уйрӑмах вӑйлӑ ҫапӑҫусем пынӑ. Унта тӑшманӑн оборонӑра тӑма питӗ меллӗ рубежсем пулнӑ, вӗсем патне пыма вӑрмансем, шурлӑхлӑ вырӑнсем чарса тӑнӑ. Тӑшман хӑйне куҫса ҫӳресе хӳтӗлеме хӑтланнӑ. Каялла чакса пырса, нимӗҫсем пирӗн чаҫсене халтан яма, унтан вара, тытса чарса, тӗп оборона рубежӗнче пырса ҫапма шутланӑ. Анчах та ҫапла шутланине пирӗн пехотинецсем хӑвӑрт маневр туса сирсе янӑ. Вӑрман айккипе кайса, вӗсем тӗреклетнӗ пунктӑн флангне пырса тухнӑ та тӑшмана питӗ вӑйлӑн пырса ҫапнӑ.

Тӑшман хирӗҫ тӑнине сире-сире ярса, унӑн резервӗсене пӗтерсе пырса, пирӗн чаҫсем малтан малалла каяҫҫӗ.

Евг. РАТНЕР.

Колхозсене транспорт хатӗрӗсем ҫителӗклӗ туса парар

Чӑваш АССР Совнаркомӗ 1944 ҫулхи февралӗн 11-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленире промысла артелӗсем умне колхозсем валли транспорт хатӗрӗсем ҫителӗклӗ туса кӑларас задача лартнӑ. Ҫав задачӑна пурнӑҫа кӗртес тесе, пирӗн Йӗпреҫри «Красный строитель» артель коллективӗ сахал мар ӗҫсем турӗ.

Артелӗн производство планӗнче транспорт хатӗрӗсем тӑвассине палӑртман пулнӑ. Апла пулин те, 1943 ҫулхи сентябрь уйӑхӗнче эпир артель ҫумӗнче обоз хатӗрӗсем тӑвакан мастерской организацилерӗмӗр. Унта ӗҫлеме пӗр мастер тупса лартрӑмӑр, ун ҫумне вӗренме 5 ҫын уйӑрса патӑмӑр. 1944 ҫул пуҫланнӑ тӗле вӗсем пурте кустӑрма ҫапма, ҫунасем тума вӗренсе ҫитрӗҫ. Вӗсене ҫав ӗҫе А. Степанов мастер вӗрентрӗ. Вӗсем виҫӗ уйӑх хушшинче 32 ҫуна, 52 стан кустӑрма туса кӑларчӗҫ.

1944 ҫулта ҫав производствӑна татах та ытларах сарас тесе, колхозсенче транспорт хатӗрӗсем юсакан мастерскойсем уҫма шутлӑртрӑмӑр. Малтанах Хурамалти «Красный водник» колхозра мастерской уҫрӑмӑр. Ӑна ертсе пыма Медведев колхознике лартрӑмӑр. Унпа пӗрле ӗҫлеме колхоз 4 ҫын уйӑрса пачӗ. Ҫапла вара унта кӗске вӑхӑтрах ҫунасемпе кустӑрмасем туса кӑларма пуҫларӗҫ, кивӗсене юсама тытӑнчӗҫ. Ҫав мастерской 1944 ҫулта ҫӗнӗрен 17 ҫуна, 10 стан кустӑрма туса кӑларнӑ. Унсӑр пуҫне кивӗ кустӑрмасене 27 стан, 37 ҫуна 29 урапа юсанӑ.

Пирӗн артель коллективӗ ун пек мастерской организацилеснипех чарӑнса тӑмасть. Вӑл обоз хатӗрӗсем юсакан производствӑсене ытти колхозсенче те уҫма тӑрӑшать. Нумаях пулмасть Ҫӗнӗ Чурашри «Ударник» колхозра мастерской уҫрӑмӑр. Халӗ ӗнтӗ унта та транспорт хатӗрӗсене юсама тытӑнчӗҫ.

Пирӗн артель коллективӗ колхозсене транспорт хатӗрӗсем юсама пулӑшас тӗлӗшпе ҫакӑн пек ӗҫсем турӗ: пӗтӗмпе 100 стан ытла кустӑрма, 52 ҫуна, 22 пӗкӗ туса кӑларнӑ, 73 стан кустӑрма, 99 урапа, 89 ҫуна тата ыттисене те юсанӑ.

Республикӑри чылай колхозсенче транспорт хуҫалӑхӗ начар. Тыр-пулсене пуҫтарса кӗртмелли хӗрӳллӗ тапхӑр ҫывхарса килет. Вӑл вӑхӑтра колхозсене урапасем тата кӳлсе ҫӳремелли ытти хатӗрсем чылай кирлӗ пулаҫҫӗ. Вӗсене туса хатӗрлес тӗлӗшпе колхозсене промысла артелӗсем пулӑшма тивӗҫлӗ. Ҫак ответлӑ ӗҫе пурнӑҫа кӗртме кашни артельтех майсем пур. Кашни артель транспорт хатӗрӗсем тӑвакан тата юсакан мастерскойсем уҫма пултарать.

Д. МИХАЙЛОВ,
Йӗпреҫри «Красный строитель» артель правленийӗн председателӗ.

Профсоюзсем ача амӑшӗсемпе ачасемшӗн тӑрӑшни

Государствӑн социальнӑй страховани бюджечӗ тӑрӑх йывӑр ҫын пулнӑ хӗрарӑмсене, ача амӑшӗсене тата ачасене пулӑшу пама кӑҫалхи ҫул 433,5 миллион тенкӗ укҫа уйӑрнӑ.

Йывӑр ҫын пулнӑ хӗрарӑмсене тата ача ҫуратакансене пособисем тӳлес тӗлӗшпе тухакан расходсем пӗлтӗрхинчен 1,5 хут ытла ӳсеҫҫӗ. Тин ҫуралнӑ ачасене пӑхма паракан укҫа-тенкӗ хисепӗ — 4 хута яхӑн, ачасене тӑрантарма паракан пособисен хисепӗ — 2,5 хут ӳсет.

Профсоюзсем ачасене шкул тулашӗнче пӑхассишӗн уйрӑмах тимлӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Ачасен клубӗсем, техникӑллӑ станцийӗсем, площадкисем валли тата ача-пӑча творчествине кӑтартакан выставкӑсем организацилеме государствӑн социальнӑй страховани бюджечӗ тӑрӑх кӑҫал пӗлтӗрхинчен 5 хут ытларах укҫа-тенкӗ — пӗтӗмпе 30 миллион тенкӗ параҫҫӗ. Фронтовиксен тата отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсен ачисене пулӑшнӑ ҫӗре кӑҫалхи ҫул 60 миллион тенкӗ расходлама палӑртнӑ.

Халӗ ВЦСПС йывӑр ҫын пулнӑ хӗрарӑмсем тата ача тӑрантаракан амӑшӗсем валли кану ҫурчӗсем организацилет. Вӗсем Мускавра, Ленинградра, Ивановӑра, Уралта тата ҫӗршывӑн промышленноҫлӑ ытти центрӗсенче те уҫӑлаҫҫӗ. (ТАСС).

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Парти организацийĕсĕр колхозри комсомолецсем

ВĂРНАР. Комсомолăн «Самолет» колхозри пуçламĕш организацинче 25 çамрăк тăрать. Вĕсенчен 7-шĕ хĕрачасем. Колхозра парторганизаци çукки комсомолецсем çине пысăк ответлăх хурать. Вĕсем хăйсен ĕçĕсемшĕн çеç мар, пĕтĕм колхоз ĕçĕшĕн те ответлă пулса тăраççĕ.

Комсомол организацийĕ колхоз правленийĕпе таччăн çыхăнса ĕçлет. Комсомол пухăвĕсене час-часах колхоз председательне, бригадирсене чĕнеççĕ. Унта комсомол пурнăçĕ çинчен çеç мар, колхозри ĕçсем çинчен те тăтăшах сӳтсе-яваççĕ. Çапла вара комсомол организацийĕ çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме колхоз правленине чылай пулăшать.

Колхозри агитмассăллă ĕçе комсомолецсем туса пыраççĕ. Бригадăсем çумне çирĕплетнĕ агитаторсем колхозниксене куллен хаçат-журналсем вуласа параççĕ, боевой листоксем кăлараççĕ. Çураки вăхăтĕнче вĕсем боевой листок 24 номер, колхозри стена хаçатне 6 номер кăларнă. Агитаци ĕçĕнче Г. Башмаков, П. Никифоров, С. Матвеев, В. Анчалов комсомолецсем пример кăтартаççĕ. Вĕсем колхозниксене сăмахпа кăна мар, ĕçпе те агитацилеççĕ: суракинче вĕсем кулленхи нормăна 150—170 процент тултарса пынă. Халĕ утă çулнă çĕрте те лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Колхозра кăçал вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе çамрăксенчен пĕр звено организациленĕ. Ăна комсомолец Н. Кудряшов ертсе пырать. Звенора 10 çамрăк. Вĕсем хăйсене çирĕплетсе панă вырăна 20 центнер кĕл, 10 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 1.500 лав тислĕк кăларнă. Пур культурăсене те вăхăтра тата лайăх пахалăхпа акнă. Каярахпа тĕрлĕрен имçамсемпе апат панă. Çумкурăксенчен тасатсах тăнă.

Вăтамран кашни гектартан 30 центнер вир, 150 центнер çĕрулми, 214 центнер пахча-çимĕç пухма обязательствăсем илнĕ çамрăксен звени.

«Самолет» колхозăн уйхирĕнче тип-тикĕс те таса тырпул ӳсет. Комсомолецсемпе çамрăксем çав тырра пĕр тăккаламасăр, вăхăтра пуçтарса кĕртме хатĕрленеççĕ.

Х. ЛИСИН.

Хĕрлĕ Çар валли паттăр воинсем хатĕрлетпĕр

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче «Спартак» спорт обществи Хĕрлĕ Çар валли резерв хатĕрлес ĕçе тĕп вырăна хучĕ. Промкооперации системинче ĕçлекен республикăри мĕнпур çамрăксем хушшинче оборонăллă спортпа физкультура ĕçне лайăхрах организацилеме тăрăшрĕ. Обществăри пур спортсменсем те çак ĕçе фронтри пек тăрăшса туса пычĕç.

Вăрçă пынă вăхăтра «Спартак» обществи 711 çамрăка штык вĕççĕн çапăçма, 921 çамрăка шывра ишме вĕрентсе кăларнă. 1358 çамрăк I-мĕш ступень ГТО значокне, 43 çамрăк II ступень значокне, 711 çамрăк «Ворошиловский стрелок» значокне илнĕ. Спорт коллективĕсенче ĕçлеме «Спартак» обществи общественнăй инструкторсем: штык вĕççĕн çапăçма вĕрентекенсем—231 çын, шывра ишме вĕрентекенсем—199 çын вĕрентсе кăларнă.

Нимĕç захватчикĕсене тăван çĕршывран çапса кăларма «Спартак» обществи Хĕрлĕ Çара малашне те вăйлăн пулăшĕ.

М. САМОЙЛОВА,
«Спартак» обществин оргбюро председателĕ.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Тырпулсене пухса кĕртмелли ĕç планне халех тумалла

Шупашкар районĕнчи Пĕчĕк Катрасри Жуков ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем çĕртме тăвас ĕçе ăнăçлăн вĕçлерĕç. Тислĕке колхоз витисенчен кăна мар, колхозниксен килĕсенчен те турттарса, çĕртме уйĕсене тăкрĕç. Пурĕ 1.760 лав тислĕк кăларнă. Тислĕк тăкнă çĕрте Явăшри тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсем ĕçлерĕç. Шкул ачисем çум çумлас ĕçе те хастарлăн хутшăнчĕç. Пурĕ кунта 25 ача ĕçленĕ. Çум çумланă вăхăтрах выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем, çумкурăксемпе вĕлтрен пуçтарса, пĕр шăтăк силос хыврĕç. Халĕ тата тепĕр шăтăк силос хывма хатĕрленеççĕ. Колхоз улăхри 4 гектар утта çулса пуçтарчĕ. Çак кунсенчех клевер çулма тухаççĕ. Клевер питĕ лайăх пулнă. Вăрлăх валли икĕ гектар клевер хăвараççĕ. Утă çулнă çĕрте колхозниксем пĕрле апатланаççĕ.

Колхозăн кăçал 147 гектар тырă пуçтарса кĕртмелле пулать. Вĕсенчен ыраш 60 гектар, çуртырисем 87 гектар шутланаççĕ.

Çурласене шăллама тытăнни икĕ эрне çитет. Планпа 10 кĕреплеллĕ çава хатĕрлеме палăртнă, 5-ĕшне туса хатĕрленĕ. Колхозăн пĕр жнейка пур, анчах ăна юсаман-ха. Правлени çак ĕçре машинăсене хирĕçле шухăшсем хыççăн каять. Колхоз председателĕн Романов юлташăн çав йăнăша тӳрлетмелле. Жнейкăна халех юсамалла.

Тырпул хума амбарсене тирпейлесе çуса тасатнă. Колхозăн пĕр молотилка пур. Ăна юсаса лартнă. Урапасем те хатĕр. Урапасене юсас ĕçре колхоз платникĕ П. Клементьев тăрăшса ĕçлерĕ. Михĕсемпе шăналăксене хатĕрлеме тытăннă. Тырă вырнă чухне ача ясли уçма палăртнă. Тырпул вырса пухнă çĕрте пĕтĕмпех уйрăм сдельщинăпа ĕçлеме пăхнă.

Анчах колхоз ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур. Правлени тырпул пухса кĕртмелли план туман. Кун çинчен колхозниксемпе те калаçса пăхман. План тăвас ĕçе халех тытăнмалла, колхозăн ĕç вăйĕпе тупрăм вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Машинăсене юсанă

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Колхозсем уйри тырпула пухса кĕртме тимлĕн хатĕрленеççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем ялхуçалăх машинисене юсанă.

«Победа» колхоз тимĕрçи Е. Шуляев жнейкăсене тахçанах юсаса пĕтернĕ, çак кунсенчех çурласене шăлласа çитерет. Ку колхоз тырă вырма хатĕрленес тĕлĕшпе ытти ĕçсене те тунă: 250 михĕ, 210 хăмăт, 70 урапа, 75 кĕреплеллĕ çава хатĕрленĕ, тырă хумалли 14 амбара дезинфекцилесе тасатнă, витнĕ шеме те юсаса йĕркеленĕ. Çапла вара «Победа» колхоз çитес кунсенчех тырă вырма тухма хатĕр.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз та (председателĕ Я. Семенов) кăçал тырă вырма тĕплĕн хатĕрленет. Паянхи куна кунта жнейкăсемпе çурласене кирлĕ чухлех хатĕрленĕ, амбарсене çуса тасатнă. Колхозăн тырă вырма тухсанах столовăйпа ачасен ясли ĕçлеме пуçлаççĕ, вĕсем валли çимĕçсем çителĕклĕ пур, çуртсем те тупнă.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕМ ÇĔРТМЕ ТУМАЛЛИ, ÇĔРУЛМИ КУПАЛАМАЛЛИ, СИЛОС ХЫВМАЛЛИ, УЛАХРИ ТАТА АКНĂ КУРĂКСЕНЕ ÇУЛМАЛЛИ ПЛАНСЕНЕ ИЮЛĔН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Çĕртме тунă	Çĕрулми купаланă	Улăхри утта çулнă	Акнă курăксене çулнă	Силос хывнă
Улатăр	44,9	41,6	73,8	21,7	54,9
Элĕк	100,0	97,9	37,4	35,5	37,7
Вăрнар	104,9	100,0	84,5	44,4	49,5
Пĕпреç	82,9	80,9	100,0	100,0	60,2
Ишлей	100,0	53,1	80,0	34,3	51,0
Калинино	100,4	97,3	78,4	65,6	71,2
Канаш	114,6	80,1	101,2	51,3	39,3
Куславкка	108,1	69,6	89,0	5,4	49,6
Комсомольски	76,7	60,1	100,0	46,6	72,3
Красноарм.	116,0	100,0	100,0	29,8	76,7
Хĕрлĕ Чутай	93,9	33,6	88,0	58,6	22,0
Кувакино	24,3	82,1	66,4	19,7	80,0
Сĕнтĕрвăрри	101,9	82,2	88,0	31,5	102,7
Муркаш	103,4	65,4	100,0	88,1	86,6
Октябрьски	102,5	83,1	94,9	46,7	65,8
Первомайски	85,3	100,0	100,0	51,0	34,3
Пăрачкав	53,8	93,5	92,1	11,9	59,2
Советски	109,9	94,7	100,0	4,4	51,9
Сĕнтĕр	108,7	99,7	88,3	43,1	64,4
Вăрмар	102,0	100,0	100,0	89,4	83,0
Çĕрпӳ	119,2	91,3	92,7	38,3	68,0
Шупашкар	114,3	90,3	92,5	33,5	41,9
Чкаловски	58,9	100,0	100,0	54,1	83,6
Чурачăк	96,6	90,8	84,6	73,9	121,1
Шăмăршă	44,3	100,0	100,0	100,0	49,3
Шăхасан	102,1	100,0	91,2	54,6	61,1
Çĕмĕрле	77,7	100,0	100,2	47,5	82,2
Етĕрне	106,2	100,0	100,0	32,0	66,9
Елчĕк	100,7	100,0	101,0	62,4	69,8
Тăвай	95,0	66,9	100,0	45,0	19,6
Шупашкар хули	109,4	100,0	41,1	—	—

Выльăх апачĕ хатĕрлеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Юлашки вăхăтра районри колхозсем силос хывас ĕçе пикенерех тума тытăнчĕç. «Красное Сормово» колхоз 120 тонна силос хывнă тата 22 лав çăка милĕкĕ пухса типĕтнĕ.

Çавăн пекех «Память Ленина» колхоз та 140 тонна, «Красный Октябрь» колхоз 100 тонна, Киров ячĕпе тăракан колхоз 75 тонна силос хывнă. Силос валли вăрмантри, çырмасемпе варсенчи курăксене пухаççĕ.

Районĕпе пурĕ паянхи кун тĕлне 2.365 тонна силос хывса, плана 74 процент тултарнă.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Энгельс ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн членĕсем выльăх-чĕрлĕх валли апат тимлĕн хатĕрлеççĕ. Çак кунсенче 90 тонна силос хыврĕç. Армути, вĕлтрен çулса типĕтнĕ. Çавăн пекех çаран улăхне клевера та вăхăтра çулса капана хыврĕç.

Çулавăри «Урожай» колхозра та 40 тонна силос хывнă. Вĕлтрен, армути тата ытти курăксем 5 лав типĕтсе хатĕрленĕ. Çавăн пекех хĕлле çамрăк выльăхсене çитерме милĕксем чылай касса типĕтнĕ. Çаран утасене тирпейлĕн çулса пуçтараççĕ. Вĕлтрен, армути тата ытти курăксене пухса типĕтес ĕçре пионерсемпе шкул ачисем нумай пулăшрĕç.

Выльăхсем валли ăшă вите

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Выльăх-чĕрлĕх валли ăшă витесем хатĕрлеме районри чылай колхозсенче тытăннă. 20 колхозра выльăх витисене юсаса пĕтернĕ, витесен ăшчиккисене шуратнă, дезинфекциленĕ. Районра лаша витисем 72, ĕне витисем 25, сурăх вити 26 юсанă.

Укерчĕк çинче: Калинино районĕнчи çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ М. Н. Логинов юлташ. Вăл вунă çул хушши агроном пулса ĕçлет. Калинино районĕнчи колхозсем кăçал çураки вăхăтĕнче агротехникăллă мероприятисене лайăх пурнăçласа пычĕç.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Республика тăрăх

ЧĂВАШСЕН НАУКĂПА ТĔПЧЕВ ИНСТИТУЧĔН УЧЕНАЙ СОВЕЧĔ

Чăваш АССР Совнаркомĕ чăвашсен наукăпа тĕпчев институчĕн ученăй советне çирĕплетнĕ. Ученăй советăн председателĕ —институт директорĕ П. Г. Григорьев юлташ, унăн заместителĕ — чăваш чĕлхин доценчĕ С. П. Горский юлташ, членĕсем: ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ И. К. Иванов, Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ К. Е. Евлампьев, Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ М. П. Макаров, Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ И. С. Тукташ, Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн архив отделĕн начальникĕ Р. С. Семенов, Чăвашсен государство издательствин управляющийĕ П. Т. Золотов, чăваш халăх поэчĕ С. В. Эльгер, научнăй сотрудник — филологи наукисен кандидачĕ В. Г. Егоров, ВКП(б) Обкомĕн парти архивĕн заведующийĕ Ф. Ярков, чăвашсен педагогика институчĕн доценчĕ А. П. Кузьмин тата композитор Г. Г. Лисков юлташсем.

РЕСПУБЛИКĂРА АЛÇЫРĂВĔСЕН ФОНЧĔ ПУЛАТЬ

Чăваш АССР Совнаркомĕ, алçырăвĕсене сыхлас тата пĕр çĕре пухас шутпа, Чăвашсен наукăпа тĕпчев институчĕн библиотеки çумĕнче алçырăвĕсен фончĕ тума йышăннă. Çав фонда чăваш литературипе фольклорне, историне, экономикине тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе ĕçлекен писательсемпе наука работникĕсен алçырăвĕсене пухаççĕ.

Хальхи вăхăтра наука библиотекинчи алçырăвĕсен фондĕнче чăваш халăхĕн пурнăçĕ çинчен материалсем пухакан Н. И. Юркин писателĕн алçырăвĕсем — 20 том, ССР Союзĕнчи Наукăсен Академийĕн член корреспонденчĕ пулнă Н. И. Ашмарин профессорăн алçырăвĕсем—60 том, Тăхти писателĕн—6 том, Н. Никольский профессорăн—214 том, пĕтĕмпе 300 том пур.

РЫСАКСЕНЕ СĂНАМАЛЛИ ТАПХАР

Республикăра рысаксене сăнамалли тапхăр пуçланчĕ. Çак кунсенче Çĕрпӳ ипподромĕнче рысаксен ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Ăмăртура 1905-мĕш çул ячĕпе тăракан колхозăн «Клан» ятлă тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн «Мур» ятлă ăйăрĕсем 2 минута та 35 секундра—1.600 метра чупса тухнă. «Сталинец» колхозăн «Авиатор» ятлă ăйăрĕ те 2 минута та 36 секундăра 1.600 метра юртса тухнă.

Июлĕн 15-мĕшĕнче çакăн пек ăмăрту Етĕрне районĕнчи Сăр леш'енчи лаша заводĕнче пулса иртнĕ.

Июлĕн 20-мĕшĕнче, республикăри ăмăртăва хатĕрленес майпа, ипподромра лашасен хăнăхмалли сĕренĕ пулса иртет. Ăмăртăва республикăри колхозсенчи тата лаша заводĕсенчи чи лайăх лашасем килеççĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 17-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Ле-Омме-Д'артенэ тата Пон-Эбер пункчĕсенчен кăнтăралла куçнă. Пирĕн çарсем Лозон шывĕн тепĕр енне çирĕплетнĕ те çав çирĕплетнĕ вырăна чылай аслăлатнă. Тăшман хаярран хирĕç тăрса çапăçать пулин те, союзниксен çарĕсем кăштах малалла куçнă. Пирĕн çарсем тăшмана Сен-Ло хулинчен çурçĕртерехре тата хĕвелтухăçнерехре хĕссе пыраççĕ. Тăшман хаярран хирĕç тăнине сире-сире ярса, союзниксен çарĕсем Виллер-Бокаж хулипе Кан хули хушшинчи чугун çул çинчи Нуайе патне пырса тухнă.

Июлĕн 16-мĕшĕнче кăнтăрла союзниксен авиацийĕ тăшманăн çулйĕрĕсене çĕмĕрнĕ».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 17-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем тăшмана çаплах хĕссе пыраççĕ, вĕсем кăштах тăшман оборонине кĕрсе кайнă. Темиçе патруль Лессэ хули çывăхĕнче Э шывĕ илнĕ район урлă каçса кайнă. Союзниксен çарĕсем Перье хулипе Сен-Ло хули хушшинче айккипе пыракан шоссе çулне Ле-Мениль-Биго çывăхĕнче татма пуçланă. Пирĕн çарсем Ремийи-сюр-Лозона туртса илнĕ. Пирĕн патрульсем Эвреси хулинчен хĕвелтухăçнелле тата кăнтăр-хĕвелтухăçнелле иртсе кайнă, хулине йышăнма ĕлкĕреймен-ха.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн чылай чугун çул объекчĕсене тапăннă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ЛИВОРНО ХУЛИНЕ ÇИТЕССИ 8 КИЛОМЕТР КĂНА ЮЛНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем Италире тăшмана атакăласа пырса, фронтăн чылай участокĕсенче самаях малалла куçнă.

Тибр шывĕ улăхĕнчен хĕвелтухăçнелле тата кăнтăралла союзниксен çарĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине сĕнтерсе, Липпиано ятлă яла туртса илнĕ.

5-мĕш армин Арно шывĕ патнелле наступлени туса пыракан Америка чăçĕсем темиçе хутчен те тăшманăн вăйлă контратакисене сирсе янă, Лоренцана хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата темиçе ял йышăннă. Лигури тинĕсĕ хĕрринче американецсен малти отрячĕсем Ливорно хулине çитесси 8 километр кăна юлнă. Поджибонси хули секторĕнче тăшманăн питех те вăйлă контратакисене сирсе янă, тăшмана çухатусем кӳнĕ. Поджибонси хулине, малтанхи пекех, американецсен 5-мĕш армийĕнчи француз чăçĕсем хăйсен аллинче тытса тăраççĕ.

Енер союзниксен йывăр бомбардировщикĕсен соединенийĕсем Вена районĕнчи аэродром çине тата ытти вăрçă объекчĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Тактика авиацийĕн самолечĕсем тăшманăн Югославири, Адриатика тинĕсĕнчи тата Кăнтăр Францири объекчĕсене пыра-пыра çапнă.

Çак мĕнпур операцисенче тăшманăн 14 самолетне пĕтерсе тăкнă. Союзниксен 20 самолет пĕтнĕ.

КĔСКЕН

* Германирен Португалие нимĕç самолечĕсем вĕçсе çитнĕ. Çав самолетсем ылттăн чăмаккисем тултарнă ещĕксем илсе пынă.

* Союзниксен Италири хальхи наступленийĕ майăн 11-мĕшĕнче пуçланнă, çавăнтанпа вĕсем 40.000 гитлеровеца тыткăна илнĕ.

* Симада адмирала Японин тинĕс-çар министрĕ пулса ĕçлессинчен хăтарнă. Ун вырăнне Номура адмирала лартнă. (ТАСС).

АМЕРИКА САМОЛЕЧĔСЕМ МЮНХЕН, СААРБРЮКЕН ТАТА ВЕНА ХУЛИСЕНЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 16-мĕшĕнче американецсен «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 1.000 бомбардировщикĕ, Англири базăсенчен вĕçсе тухса, Мюнхенпа Саарбрюкен хулисене тапăннă, вĕсене 500 истребитель хӳтĕлесе пынă. Çав вăхăтрах американецсен 250-ран пуçласа 500 таран йывăр бомбардировщикĕсем, Италири базăсенчен вĕçсе тухса, Венăри çар сооруженийĕсене тапăннă. Икĕ хушшинче те бомбăсене приборсем кăтартнă тăрăх пĕлĕтсем витĕр пăрахнă.

НИМĔÇСЕН ВИÇĔ ГЕНЕРАЛНЕ ТЫТСА ХУПНА

ЖЕНЕВА, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарири «Сюисс» хаçат çапла пĕлтерет: темиçе кун каярах нимĕçсен виçĕ генералне тытса хупнă. Вĕсем Хĕвелтухăç фронтĕнчи чăçсен командирĕсем пулнă. Вĕсене «вăрçа малалла тăсма кирлĕ мар» тенĕшĕн арестленĕ. Хаçат çапла çырать: «Нимĕçсен тата ытти чылай офицерĕсен ĕçĕсене те тĕрĕслеççĕ. Вĕсем нимĕçсен çарĕсемпе пĕрле Хĕвелтухăç фронтĕнче пулнă, анчах та халĕ вĕсене вырăнтан кăларнă. Нимĕç хаçачĕсем «вăрçа тек малалла тăсма кирлĕ мар» текен çар çыннисене хăратса çыраççĕ.

ФИНСЕМ ÇАПЛАХ ШВЕЦИЕ ЙЫШЛĂН ТАРАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндирен Швецие таракан çынсен хисепĕ ӳссех пырать. Финлянди Ботнически залив хĕррипе луткасемпе çӳреме чарса лартнине пăхмасăрах, çав çынсенчен пысăкрах пайĕ Ботнически залив урлă луткасемпе ишсе каçаççĕ. Кунсăр пуçне, çынсем, уйрăмах салтаксем, Хапарандăран çурçĕртерехре типçĕр çинчи чикĕ урлă та каçма пуçланă.

Швецире тухакан «Арбетарен» хаçат хăйĕн «Арканса пыракан Финлянди» ятлă умстатьинче çапла çырать: «Финляндирен таракан çынсен хисепĕ кунсеренех ӳссе пырать. Çакă вăл Финляндире лару-тăру мĕнле пулнине нимрен те лайăхрах кăтартса парать. Швеци финн çарĕсен отрячĕ тарса кайни уйрăм çынсем тарнинчен (вĕсем йышлăн пулсан та) пахарах. Отряд тарни финсен чăçĕсенче Финляндирен тарас ыйтăва уççăнах сӳтсе явнине кăтартать. Вăрçă финн халăхне йăлтах йăлăнтарса çитернĕ; тарма хăрушă пулин те, нумайĕшĕ халь Финляндирен тарма тăрăшаççĕ».

ПĔРЛЕШУЛЛĔ ШТАТСЕНЧЕ РУЗВЕЛЬТА ПРЕЗИДЕНТА СУЙЛАМА ТĂРĂШАКАН КОМИТЕТ ТУНĂ

ВАШИНГТОН, июлĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Производствăллă профсоюзсен конгресĕн (КПП-н) политикăллă ĕçсем тума суйланă комитечĕн председателĕ Хиллмэн çапла пĕлтернĕ: Америкăри паллă общество деятелĕсем 80 çын ытла «политикăллă ĕçсем тума гражданла комитет» тунă, ăна Рузвельта тепĕр хут президента суйламашкăн тата конгреса Рузвельт политикишĕн тăракан çынсене суйламашкăн кампани иртерме тунă. Çак çĕнĕ комитета профсоюзсен паллă деятелĕсем, интеллигенци представителĕсем тата ют çĕршывсенче çуралнă американецсен тĕрлĕ ушкăнĕсен руководителĕсем кĕнĕ. Çав комитетăн исполнительнăй органĕнче 11 çын тăрать, вăл шутра — Миннесста штатĕнче губернатор пулнă Бенсон, КПП председателĕ Мэррей, фермерсен наци союзĕн председателĕ Паттон, автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн председателĕ Томас, политикăллă ĕçсем тума суйланă комитетăн председателĕ Хиллмэн тата ыттисем те.

Хиллмэн мĕнпур прогрессивнăй американецсене, вĕсем мĕнле партире тăнине пăхмасăрах, çав комитета кĕме сĕннĕ.

Хаçат-журналсен представителĕсен ыйтăвĕсем çине ответлесе, Хиллмэн çапла каланă: политикăллă ĕçсем тума суйланă комитет Уоллеса вице-президента суйлама кандидата тăратасшăн, тенĕ.

Çавăнпа пĕр вăхăтра производствăллă профсоюзсен конгресĕн председателĕ Мэррей пресс-конференцире çапла каланă: КПП Уоллеса вице-президента суйлама гăрăшма сăмах татрĕ, тенĕ.

Совет çыннисен патриотизмĕ

Совет халăхĕ тăваттăмĕш çул ĕнтĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç Отечественнăй вăрçă туса пырать.

Отечественнăй вăрçăн виçĕ çулталăкĕ гитлерла Германи вăрçăра пĕтсе ларасси патне çитсе тăнине, ăна тĕппипех çапса аркатас совет çыннисен кирлине кăтартса парать. Гитлеровецсем пĕтĕм тĕнчери халăхсене хăйсен чури туса хума пикенчĕç, анчах вĕсен хăмпи часах çурăлчĕ. Вăрçă ĕçĕсем фашистла захватчиксем хăйсем çине пурнăçа кĕртмелле мар задача илнине кăтартса параççĕ. Гитлеровецсем Совет Союзĕнче «пурнăç пространстви» тыпса илме шутласа хунă пулнă, анчах вĕсем ун вырăнне миллионшар нимĕç салтакĕсем валли масар тупнчĕç.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç захватчикĕсен пур планĕсене те аркатса ячĕ. Хĕрлĕ Çар захватчиксене тытса чарчĕ кăна мар, вĕсене хĕвеланăçнелле шăлса ыватрĕ. Советпа Германи фрончĕсенчи çапăçусенче хавшанă фашистла çар халĕ шĕтĕмпех çапса аркатасси умĕнче тăрать.

Паттăр Хĕрлĕ Çара пĕтĕм совет халăхĕ тĕрек парса тăрать. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсем совет ĕççыннисене татах та ытларах пĕтĕçтерчĕç; рабочисемпе хресченсене тата интеллигенцие хăйсен совет влаçĕ тавра ытларах пĕтĕçтерчĕç.

Пирĕн пĕтĕм халăх хăйĕн юратнă Тăван çĕршывне сыхлама пĕр çын пек пулса çĕкленчĕ. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче, Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхсен ывăл-хĕрĕсемпе пĕрле, чăваш халăхĕн ывăлĕсем те паттăрăн çапăçаççĕ. Вĕсенчен пиншерĕшĕ Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене, вуншарăшĕ Совет Союзĕн Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Фронтовиксем умĕнче тылри паттăрсем те парăмра юлмаççĕ. Вĕсем предприятисемпе колхоз уйхирĕсенче, учрежденисенче вăя шеллемесĕр ĕçлесе, фронта ытларах та ытларах пулăшу парса тăраççĕ.

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче çапăçакан самолетсемпе танксенчен чылайĕшне пирĕн чăваш халăхĕ перекетленĕ укçапа тунă. Халĕ кăна пирĕн земляк Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов «Красный луч» колхоз колхозникĕн А. М. Сарсковăн укçипе тунă самолета хăй аллине илчĕ.

Çулталăк çурă каярах, пирĕн Тăван çĕршыв вилĕмле хăрушлăх умĕнче тăнă вăхăтра, нимĕçсем Атăл патне çитнĕ чухне, Саратов колхозникĕ Ферапонт Головатый пуçарăвĕпе, миллионшар совет çыннисем хăйсем перекетленĕ укçапа Хĕрлĕ Çар валли самолетсемпе танксем, тупăсем тунă çĕре пачĕç. Вырăс хресченĕн чаплă пуçарăвĕ Совет Союзĕнчи пур облаçсемпе республикăсенче те анлăн сарăлса кайрĕ.

Совет патриочĕсем хăйсен вăйĕсене, хăйсен перекетлесе усранă укçа-тенкисене хамăрăн çĕршыв хăватне вăйлатнă çĕре пачĕç. Улатăр районĕнчи «Красный луч» колхоз колхозникĕ Андрей Михайлович Сарсков хăй перекетленĕ укçана 100.000 тенкĕ хамăр земляк Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов валли самолет илме пачĕ. Пăрачкав районĕнчи колхозник Дубровин хăйĕн ывăлĕ валли самолет тума 100 пин тенкĕ пачĕ. Шуршановсем ывăлĕ валли танк илсе пачĕç. Дубровинăн самолечĕпе Шуршановсен танкĕ хĕрӳллĕ çапăçусенче сахал мар фашистсене пĕтерчĕç.

Пирĕн орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем çав кунсенче Хĕрлĕ Çар фондне 80 миллион тенкĕ ытла пухса пачĕç. Вăл укçапа «Чăваш Колхозникĕ» ятлă танксен колоннине тата «Чăваш Комсомолĕ» ятлă самолетсен эскадрильине тунă.

Чăваш колхозникĕсен укçипе тунă çапăçу техники нимĕç захватчикĕсене Сталинград патĕнче, Кавказра, Орелпа Смоленск патĕнче, Ленинград патĕнче тата Донбасра, Днепр патĕнче, Карели перешейкĕнче, Белоруссире çапса аркатма пулăшрĕ.

Халĕ фронтсенчи лару-тăру пире усăллă пулса пырать. Пирĕн урамра та уяв çитрĕ. Хĕрлĕ Çар хамăрăн Тăван çĕршыва фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тасатса пырса, чылай вырăнсенче государство чиккине тухрĕ, фронтăн пĕр участокĕнче тăшман çĕрĕ çине кĕрсе кайрĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çар тăшмана Белоруссирен, Карело-Финн республикинчен, Литвăпа Латви совет республикисенчен хăвалаçа кăларать. Хĕрлĕ Çар тăшмана хамăр Тăван çĕршывран тасатнипех чарăнса тăрас çук, тăшмана сывлама памасăр хăваласа пырса, ăна хăйĕн шăтăкĕнчех пĕтерсе тăкĕ.

Гитлерла Германие хĕвеланăçĕнчен пирĕн союзниксем çисĕнмеллех пыра-пыра çапаççĕ.

Вăрçă татăклă тапхăра кĕчĕ, вăл ĕнтĕ вĕçленсе пырать. Гитлерла Германипе унăн шайккисене пĕтĕмпех çапса çĕмĕрмелли кун çывхарса килет. Анчах та çĕнтерӳ çулĕ çăмăл мар. Вăрçăн юлашки татăклă тапхăрĕ чи йывăр вăхăт пулать. Мĕншĕн тесен фронт Германи чикки патне çывхарса пынăçемĕн гитлеровецсем урса кайса кĕрешĕç.

Çавăнпа та совет çыннисен ялан Сталин юлташăн сăмахĕсене асра тытмалла. «Çĕнтерӳ кĕрешӳсĕр тата вăя хумасăр пулмасть. Ăна кĕрешсе илес пулать. Çĕнтерӳ халĕ çывăх ĕнтĕ, анчах ăна çĕнсе илме çĕнĕрен ытларах вăй хуни кирлĕ, пĕтĕм тыл тăрăшса ĕçлени кирлĕ, Хĕрлĕ Çарăн фронтра пĕлсе те татăклăн çапăçни кирлĕ», — терĕ вăл.

Вăрçăн татăклă тапхăрĕнче те совет ĕççыннисем, Сталин юлташ кăтартса панисене асра тытса, фронта пур майсемпе те пулăшаççĕ. Патриот-колхозникăн Ферапонт Головатыйăн сасси татах пĕтĕм Совет Союзĕпе янрарĕ. Каллех вăл самолет тума 100 пин тенкĕ пачĕ. Ферапонт Головатыйăн пархатарлă пуçарăвне пĕтĕм халăх йышăнчĕ. Пирĕн республикăри ĕççыннисем те, фронта пулăшас тĕлĕшпе яланах малти ретре пулнăскерсем, çак пархатарлă ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ Гаязов юлташ хамăрăн земляк Совет Союзĕн Геройĕ Кочетов валли самолет тума хăй перекетлесе усранă укçине 110 пин тенкĕ пачĕ. Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхоз председателĕ П. Майков ферма заведующийĕпе С. Соловьевпа пĕрле Совет Союзĕн Геройĕ Орлов юлташ валли самолет илме 50-шар пин тенкĕ пачĕç, колхоз бригадирĕ Е. Смелова колхоз счетоводĕ В. Волков юлташсем Совет Союзĕн Геройĕ Васильев валли самолет илме 100 пин тенкĕ пачĕç. Çав колхозрах пăрусем пăхакан К. Григорьева, пилĕк ача амăшĕ, çапăçу техники тума 12 пин тенкĕ пачĕ. Куславкка районĕнчи «Путь к социализму» колхозри колхозниксем пĕр самолет илмелĕх укçа пачĕç. Çапăçу техники тума Калинино районĕнчи «Коминтерн» колхоз колхозникĕсем 100 пин тенкĕ, Шăхасан районĕнчи «Свобода» колхоз колхозникĕсем 100 пин тенкĕ, Муркаш районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем тата «Крестьянин» колхоз колхозникĕсем 50-шар пин, педагогика институчĕн коллективĕ 100 пин тенкĕ, Канашри вагонсем юсакан заводри рабочисем, инженерсемпе служащисем 498 пин тенкĕ, 3064 номерлĕ госпитальре ĕçлекенсем 64 пин тенкĕ пачĕç. Хăйсен перекетленĕ укçине Тăван çĕршыва вăйлатма паракансен йышĕ кунран кун ӳссе пырать. Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники тума укçа пухасси Чурачăк районĕнче те лайăх пырать. Унта июлĕн 5-мĕшĕ тĕлне 1 миллион та 135 пин тенкĕ пухнă. Вăрмар районĕнче 757 пин тенкĕ, Шăхасан районĕнче 618 пин тенкĕ, Муркаш районĕнче 500 пин тенкĕ ытла пухнă. Çав вăхăтрах хăшпĕр районсенчи партипе комсомол организацийĕсем çав ĕçе кирлĕ пек пуçарса пымаççĕ-ха. Çавăнпа ĕнтĕ Комсомольски, Вăрнар, Тăвай, Çĕрпӳ районĕсенче çак ĕç сӳрĕккĕн пулса пырать.

Фашистла нимĕç захватчикĕсене тĕппипех çапса аркатас сехет çывхарса килнĕ вăхăтра пирĕн халăх фронта ытларах пулăшас туйăмпа пурăнать. Пĕтĕм халăхăн патриотизмне аталантарса пырасси— партипе комсомол организацисен кулленхи тивĕçĕ пулса тăрать.

Халĕ пур колхозсенче те пуян тырпула пухса кĕртме хатĕрленеççĕ. Ĕç планĕсене тăваççĕ, пур резервсене те мобилизацилесе хураççĕ. Предприятисен коллективĕсем çĕршыва фронт валли продукци ытларах кăларассишĕн кĕрешеççĕ. Çавăнпа пĕрлех вĕсем хăйсем перекетленĕ укçана Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники тума параççĕ.

Хамăр перекетленĕ укçа-тенкĕпе Хĕрлĕ Çар валли техника тума парса, фабрикăсемпе заводсенче, колхоз уйхирĕсенче тăрăшса ĕçлесе, тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатас сехете çывхартар! Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ тума!

М. А. АНДРЕЕВ.
ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

«Заготживсырье» конторине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: тĕрлĕ кайăксем ӳстерес ĕçе пĕлекен зоотехник, оперативнăй учет начальникĕ; тир-сăран, мамăклă тир, çăм ĕçĕçене пĕлекен специалистсем, бухгалтерсем тата çăмăл машинăпа çӳреме шофер кирлĕ.

Ĕçлеме илнĕ çынсене хваттер параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 31. Телефоны 6—42, 2—61.

Главнефтеснабăн чăваш управленине строительствăра ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: ĕç йĕркелекен, бухгалтер, главнăй механик тата тĕрлĕ рабочисем.

Ĕçлеме илнисене хваттер тата пахчасем параççĕ. Ларек пур. Столовăй уçăлать. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом печати, 4-й этаж, комната № 44. Телефон 3—83. Главнăй инженертан ыйтмалла.

Çăкăр пĕçерекен треста инженер-механик, плановик, нормировщик тата бухгалтер-ревизор кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 6-а.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00267. Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ №2 ф. 6, 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.